**Ӳссен эсӗ кам пулан?**

Эпӗ ыйтрăм Лӗньăран:
– Ӳссен эсӗ кам пулан?
Лёня: – Летчик пулап,– тет, –
Самолётпа вӗҫеп, – тет.

Эпӗ ыйтрăм Тольăран:
– Ӳссен эсӗ кам пулан?
Толя: – Тухтăр пулап,– тет,–
Ҫын  чирлесен – чӗртеп,– тет.

Эпӗ ыйтрăм Кольăран:
– Ӳссен эсӗ кам пулан?
Коля: – Конюх пулап,– тет,–
Лашасене пăхап,– тет.

1977

*Давыдов-Анатри, В. Ӳссен эсӗ кам пулан? : [сăвă] / В. Давыдов-Анатри // Чăваш литературин антологийӗ. – Шупашкар, 2015. – [Т. 4] : Ача-пăча валли ҫырнă хайлавсем. – С. 158.*